К 84
Е 91
154276

**Георгий Ефимов**

# ĂШĂ КĂМĂЛ

Си...
экзем...

ЧĂВАШГОСИЗДАТ • 1953

Национальная библиотека ЧР
00154276
...ЕРЕНО
...59

**Георгий Ефимов**

Е91

154276 обяз. экз.

# ĂШĂ КĂМĂЛ

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1953

ПРОВЕРЕНО
2010



# ХĔРЛĔ ПЛОЩАДЬ

## ХЁРЛĔ ПЛОЩАДЬ

Мухтавлă площадь! Кашнине эс çывăх!
Эс сарлака Çĕршывăмăн чĕри,
Куллен-кунах чечекленен çĕршывăн,
Пур халăхсен ян-янракан юрри.

Йĕри-тавра эп савăнса сăнатăп,
Умра куратăп Спасски башньăна,
Ун çутă ылттăн сехетне куратăп,—
Пĕтĕм тĕнче, тĕнче пĕлет ăна.

Вăл çапнине эс те, эп те итленĕ,
Ир-каç ăна итлет мĕнпур тĕнче.
Малтан ăна тăван аттемĕр Ленин
Çапмашкăн хушнă аслă çĕр çинче.

Çав сехетпе сехетĕм ман пĕр пултăр,
Унран вăл пĕр секунд кая ан юлтăр.
Пĕр тан утам эп аслă Кремльпе,
Тивĕç пулам ăна эп ĕçĕмпе.

Çак площадьрен пур халăхсен çулпуçĕ
Пире савса ăшă салам ярать.
Çак вырăнтан ун ăшă, ăслă куçĕ
Пур халăха ялан курса тăрать.

Кунтан курать вăл Атăл—Дон каналĕн
Кĕленче пек йăлтăракан шывне,—
Шур кимĕсем шыв çийĕн каллĕ-маллĕ
Шур акăш пек илемлĕн шунине.

Ав пăрахут шыва çурса иртет те,
Ун хыçĕнчен хум явăнса юлать.
Савăннăран, шур пăрахут тӳсет-и!—
„Тавралăх илттĕр“ тенĕн кăшкăртать.

Кунтан курать вăл анлă Атăл ГЭС-ĕ
Хĕвелпе тан çĕре çутатнине,
Уй-хирсене уяр кунсем килсессĕн
Çĕр ылттăн тырăпа витĕннине.

Ун умĕнче Тăван çĕршыв илемĕ,
Ун умĕнче пушхир çеçке сарать.
Çак Хĕрлĕ Площадь, çак мухтавлă Кремль
Кашни çынна çĕн вăй-хăват парать.

Эп Хĕрлĕ Площадь варринче тăратăп,
Умра гранитлă, чыслă Мавзолей.
Иртмессерен унта кĕрсе тухатăп:
Ильич пилленĕ халăха телей.

Çук, Ленин чĕрĕ!
Унăн тусĕ Сталин
Вăй-хал парать куллен çĕршывăма.
Пулас кунсемшĕн вăл йăлтах ăсталĕ,
Пире çитерĕ коммунизма.

1952

## МИР ДЕКРЕЧĔ

Ноябрь каçĕ. Çил хаярланать.
Ноябрь çилĕ витĕрех шăнтасшăн.
Нева çинче хум хыççăн хум чупать,
Хумсем сикеççĕ çыранран тухасшăн.
Анчах та революци паттăрне
Нимле сив çил витеймĕ те шăнтаймĕ.
Пуласлăх хăват панă ун чунне,
Вăл ирĕк çын халь, тăшмана пуç таймĕ.

Каç сĕмлĕхне сирсе тухать хĕвел.
Петроградра хĕрӳллĕ кун пуçланчĕ.
Ав, Смольнăйран хаяр кĕрешĕве
Пĕр ушкăн халăх çĕкленсе ăсанчĕ.
Штурмланă мар-и Зимние вĕсем,
Вĕсем çĕн эрă пуçласа яман-и!
Мухтавлă революци кунĕсем,
Сире этемлĕх ĕмĕр-ĕмĕр манмĕ.

Пĕр çын килсе тухать халь ман умма.
Хăй савнăçлă, ун куçĕсем кулаççĕ:
„Атя-ха, шăллăм,—тет,—кил вулама,
Çак хаçатра паян мĕскер çыраççĕ".
Пĕр çамрăк çын илет ун хаçатне.
Хаçачĕ тин çеç, тин çеç пичетленнĕ.
Çав вăхăтрах тахши тата чĕнет:
„Унта, тăванăм, „МИР ДЕКРЕЧĔ... ЛЕНИН..."
Кĕçех пуçлаççĕ пурте калаçма,
Кашни иккен вăл хаçата вуланă:
„...Ĕçхалăхне чĕнеççĕ хăтарма
Пур пусмăртан... Кунта çапла каланă".
„Вула. Чĕнеççĕ çирĕп мир тума"...
Пĕри пуçларĕ хыттăн вулама.

Çав Мир декречĕ ĕмĕр-ĕмĕр çирĕп,
Унта ал пуснă Ленин чи малтан.
Çавна пула çĕршыв телейлĕ, ирĕк,—
Нихçан шикленмĕ вăрă-хурахран.
Паянхи Ленин—аслă, сывăх Сталин
Пире чĕнет мире çирĕплетме.
Ĕççыннисем унпа ялан тăванлă,
Çĕкленчĕç пурте миршĕн кĕрешме.
Пирĕнпеле тăван аттемĕр Сталин,
Этемлĕх тусĕ пирĕнпе пĕрле.
Эпир çĕкленнĕ вăрçа хирĕç халĕ.
Тĕп пултăр вăрçă! Мир çĕнтермелле!
Мир ялавне тăван Китай çĕклерĕ,
Вăл ĕмĕр усмĕ чыслă ялава.
Болгари, Польша çирĕппĕн—МИР!—терĕ,
Пĕлетпĕр: ĕçлĕ халăхра—хăват.

Ман асăмра пĕрремĕш Мир декречĕ,
Вăл вăхăт халь те умăмра тăрать.
Çак хаваспа ман кăмăлăм çĕкленчĕ,—
Çав кунранах çĕршыв мире сыхлать.

1952

## КОМСОМОЛ БИЛЕЧĔ

Мухтавлă комсомол билечĕ,
Эс вăй паратăн чунăма.
Хастарлă комсомол тивлечĕ
Пире телейлĕн çитĕнтерчĕ,
Ӳссен çĕр хуçисем пулма.

Çӳретчĕ комсомол билечĕ
Пирĕнпеле вут-çулăмра.
Унпа чĕре çирĕпленетчĕ,
Унпа атакăна кĕретчĕ
Пур çамрăк йышăм вăрçăра.

Ун витĕр тухнă шухă пуля,
Çапах выртса юлман хирте.
Малта, ялан малта, хăюллăн,
Эпир кăкăрсемпе çул уçнă—
Халь аслă Çĕнтерӳ пирте!

Хуппи çинче куратăп: Ленин.
Вăл уçнă-çке кун-çулăма;
Пире вăл пурăнăç пилленĕ,
Эпир ун ĕçĕнчен вĕреннĕ
Тăван çĕршывшăн пурăнма.

Эй, Комсомолăм—çамрăк халăх!
Мĕн чухлĕ ĕмĕтсем санра!
Пĕтĕм çĕршывăм савăнмалăх
Ӳсетпĕр çирĕп те вăй-халлă,
Вăй-халшăн юррăмăр янрать.

Хире тухать-и пирĕн ушкăн,
Кĕрет-и пысăк завода,
Çĕн çĕнтерӳ тăвар, тет, шухăш,
Çакна ан ман, тет, саманта.

Ыраншăн паянах ĕçлетпĕр,
Хăват илетпĕр кунсерен.
Ĕçе илем те чыс кӳретпĕр...
Кун-çул тытмашкăн вĕренетпĕр
Юратнă Сталин аттерен.

Вылянă чух пирте—ачалăх,
Ĕçре—кирек хăçан маттур,
Юратура—таса ачашлăх,
Тăшмансене—чăн курайманлăх,
Çĕнмешкĕн—иксĕлми вăй пур.

Мухтавлă комсомол билечĕ!
Орденсемпе вăл илемленчĕ,
Телейлĕ çамрăклăх унра.
Чĕремĕрсем хастарлă пирĕн,
Пуласлăх паллă, çутă, çирĕп:
Хĕвеллĕ коммунизм умра.

## МАЙ УЯВĔ

Май уявĕ паян! Манăн çамрăк чĕре
Хăвăрт-хăвăрт тапать çĕкленӳллĕн.
Кайăк мар—самолет ярăнать тӳпере,
Янкăс юрă вĕçет килĕшӳллĕн.

Ман çĕршыв çыннисем пĕр канашлă пулса
Çĕнтерӳ юррине ян-янратрĕç.
Ун кĕвви, çĕнĕрен çĕнĕ ĕмĕт хушса,
Чĕрере аслă туйăм çуратрĕ.

Ăшă çил вĕçтерет алăри ялава,
Тен, манпа вăл кăштах калаçасшăн?
Вăл паян вĕçсе иртнĕ мĕнпур çĕршыва,
Çынсене халь лăпкать вăл ачашшăн.

Вăл пуçларĕ хуллен манпала калаçма:
„Польшăра, Китайра эпĕ пултăм.
Пит васкарăм çĕршыв саламне калама,
Ыр çынсен ячĕпе сывлăх сунтăм.

Океан леш енне, сар шуйттан çĕршывне,
Шавлакан хумсем çийĕн васкарăм.
Уявлаççĕ унта та халь Май уявне,—
Халăха пĕр-пĕр Трумэн-и чарĕ?..“

Çил вĕçет малалла, вăл мухтать уява,
Вăл паян кашнинех çупăрласшăн.
Вăл лăпкать алăри ман хăмач ялава,
Ун çумне сĕртĕнет вăл ачашшăн.

Ман ялав çийĕнче—çурлапа мăлатук,
Çут хĕвеллĕ çĕршывăмăр гербĕ.
Çак ялав—пирĕн вăй, çут телей, юрату,
Çак ялав айĕнче ӳснĕ эпĕ...

Тӳпере яранса, пĕр канмасăр вĕçет
Шурă юр пек шап-шур кăвакарчăн.
Хĕрлĕ Площадьпеле аслă халăх иртет—
Пĕр тăванлăн, пĕр кăмăллăн, таччăн.

## ГИМН КĔВВИНЕ ИЛТСЕССĔН...

Хăватлă гимн кĕввине илтетĕн,
Ирех тăрсассăн, аслă Мускавран.
Ун кĕввипе ялан вăй-хал илетĕн,
Ĕçе каятăн кăмăллăн ялан.

Вăл кĕвĕ санăн туйăмна çĕклерĕ,
Станок кĕрлевĕ килĕшрĕ сана.
Вара эрне тăвас ĕçе вĕçлерĕн,—
Эрне халь саншăн пĕр кунпа танах.

Кун вĕçленет. Киле килетĕн эсĕ.
Чи ăшă кулă куçусем çинче.
Мускав сасси... Ун сассине илтсессĕн,
Вăй хушăнать этемĕн чĕринче.

Сан умăнти вĕр-çĕнĕ репродуктор
Илемлĕ, янкăс юрă шăрататъ:
„Çĕршывăм тăрăх ирĕк юрă юхтăр!
Хастар ĕçчен телейлĕ-çке кунта“...

Ĕç хыçĕнчен итле те кан, тăванăм,
Çĕршыв сана пурне те халалать.
Пур ырлăха та ху валли тăватăн,
Çĕн ӳсĕмпе утатăн малалла.

Кĕçех эфир çинче янрарĕ сасă,
Пуçларĕ диктор лăпкăн калаçма.
Чипер вулать. Куç умĕнче пулсассăн
Эп илĕттĕм ăна хам ытама.

Вăл пĕлтерет: „Çулпуç патне çыраççĕ
Пур çĕрсенчен саламлă çырусем.
Ăна сывлăхпала кун-çул сунаççĕ
Çĕршывăмри миллионшар çынсем“.

Кĕçех янрать тăван Мускав сехечĕ,
Унтан çĕршывăм гимнĕ илтĕнет,—
Вăл кĕвĕре ĕçчен çынсен тивлечĕ,
Вăл кĕвĕ пирĕн ĕмĕте çĕклет.

1952

## ПЁРРЕМЁШ САСПАЛЛИ

Пĕрремĕш класс. Букварь выртать умра...
Йăлтах асра, ăна епле манан?!
Ăнлантарать учитель кăмăлран,
Паллаштарать саспаллипе мана.

Мана çеç мар, класри ачасене.
Вăл пуринпе те ырă калаçать.
Ăшă куçпа пăхать кашнин çине,
Тăван атте сăнанăн туйăнать.

„Паян шкулта ларатăр пуçласа,
Ларатăр шăппăн парта хушшинче.
Пурне те тимлĕн, тĕплĕн ăнлансан,
Маттур пулатăр пурнăç тăршшинче“.

Доска çине çырать вăл саспалли,
Пĕрремĕш саспалли пире валли.
Кăшт хумханса сăнатпăр-çке ăна,
Чи ăшă туйăм вырнаçать чуна.

Кĕçех пире куçран пăхса калать:
„Ку саспалли:—„А“ саспалли пулать,
Эсир ан манăр, ачасем, ăна:
„Анне“ сăмах унпа-çке пуçланать“...

Нумай çулсем халь иртрĕç унтанпа,
Анчах çав кун ялан ман асăмра.
Эп асилетĕп ырă кăмăлпа,
„А“ саспалли ĕмĕрлĕхех умра.

Анне!—ялан вăл çывăх чĕрене!
„Анне“,—тесе чĕнетпĕр Çĕршыва.
„Çĕршыв“,—тесессĕн пирĕн куç умне
Çулпуç тухать. Вăл кашнинех тăван.

Пӗрремӗш класс каймасть ман асӑмран.
Асра упратӑп ӗмӗрех ӑна.
Апла пулсан Ҫӗршыв мӗн ачаран
Вырнаҫнӑ пирӗн ирӗклӗ чуна.

1952

# Ç Ы Р У

*Нью-Йорка...*

Эс астăван. Паллах эс астăван
Вут-çулăм хыпнă Эльба çыранне.
Ун чух эпир тĕл пулнă санпалан,
Паллашнă май ал панă пĕр-пĕрне.
Çав кун, хавасланса чун-чĕререн,
Пирĕнпеле çӳрерĕн Берлинра.
„Совет çыннин мухтавлăхĕ çинчен
Ялан эп калăп,—терĕн,—Нью-Йоркра.
Ан пултăр,—терĕн,—вăрçă нихăçан,
Сыхлар яланлăх лăпкă пурнăçа“.
Анчах уолл-стритсем халь тĕнчене,
Ултав сарса, чикесшĕн вут ăшне.
Вĕсемшĕн вăрçă—тупăш, пысăк мул,
Халăхсене сутасшăн укçалла.
Вĕсемшĕн ĕççынни кил-çуртсăр юл,
Çăвар уçма та ан хăй, чĕмсĕр пул,—
Мул хуçисен кĕсйи-çке тулмалла.
Ав, вăрçăпа пĕрмай аташнăран,
Форрестолсем сикеççĕ кантăкран...
Çакна хăвах эс тивĕç ăнланма.
Анчах пултараймарăм эп чăтма.
Е эс лăплантăн, мантăн Берлина,
Курмастăн-и çĕн вăрçă çулăмне?
Тĕреклĕ миршĕн пар эс сассуна,
Эс тивĕç пул чăн-чăн этем ятне.
Тен, арăм пур-тăр, пур-тăр ывăл сан,
„Атте“ тесе чĕнет пуль йăпатса,
Анчах мул хуçисем вут хыптарсан,
Ачу сан юлĕ тăлăха тăрса.
Хĕвеллĕ куншăн, миршĕн тĕнчипех
Уолл-стрита куçран питленĕ чух,
Кала салтакăн вирлĕ сассипе:
Ĕççыннисемшĕн—МИР! Вăрçа çул çук!

154276



Чувашская Республиканская Библиотека им. М. Горького

Эпир нумайăн, вăйсăр мар эпир!
Саватпăр ĕçлĕ, лăпкă кунсене.
Умра ялан хĕвеллĕ çутă ир
Пире хĕрӳ ĕçе тухма чĕнет.
Уолл-стритсем аташчăр вăрçăпа,
Кунта килмешкĕн шут тытнах пулсан:
Тĕнче нихçан курман хăвăртлăхпа
Калле тарма вĕренччĕр-ха малтан.
Шеллемĕ халăх юнĕçенсене.
... Эс астăвэн, паллах, эс астăван
Вут-çулăм хыпнă Эльба çыранне.
Çав çыранра тĕл пулнă санпалан.
Ун чух пĕрле çӳрерĕмĕр эпир...
Апла пулсассăн, пирĕн пек кала:
„Тĕп пултăр вăрçă! Халăхсемшĕн—МИР!“

## „КОМСОМОЛЬСКАЯ“ СТАНЦИРЕ

Шупашкартан эп ҫитрӗм Мускава,
Манра ҫӗкленчӗ иксӗлми хаваслăх.
Тӳпе сăрпа сăрланă пек кăвак.
Умра Мускав, куҫпа виҫеймӗн, аслă.

Анса каятăп чаплă метрона,
Мана йăлтах хăй тыткăнне вăл илчӗ.
Ҫут хӗвелрен те ҫутăрах ҫунать
Ильич ҫути ҫӗр айӗнче.

Ак, килчӗ
Электропоезд шăплăха сирсе.
Ҫынсем лараҫҫӗ, эп ҫаплах тăратăп,
Пăхас килет-ҫке манăн киленсе,—
Ҫак илеме пӗрремӗш хут куратăп.

Ман кăмăлра чи ырă шухăшсем
Чуна телей ҫуначӗсем хушаҫҫӗ.
Ӗҫре хастарлă комсомолецсем
Куҫăм умне улăпсем пек тухаҫҫӗ.

Ытарайми хула ҫӗр айӗнче,
Кун пеккине ăҫта курма пулать-ши?
Паян эп куртăм тантăш ӗҫӗнче
Ҫулпуҫ ӗҫне.
Вăл—комсомолăн ашшӗ.

Кӗҫ тепӗр поезд чарăнчӗ хуллен.
Кӗрсе ҫеҫ лартăм—ерипен тапранчӗ.
Ҫилтен те хăвăрт вӗҫтерет иккен—
Умра каллех кермен пек чаплă станци.

Ку станци те йăлт мрамор, тап-таса...
Тухатăп метроран хавасланса,
Куҫ умӗнче Мускавăмăр илемӗ.
Куҫ умӗнче телейлӗх ҫурчӗ Кремль.

## МУСКАВ УРАМĔНЧЕ

Канмалли кун. Мускав урамĕпе
Эп васкамасăр, ерипен утатăп.
Карти-карти хур-кайăк иртнĕ пек,
Машинăсем пыраççĕ йĕркипе,—
Вĕсем çинче—урам сăнне куратăп.

Умра илемлĕ çӳлĕ çурт ларать,
Ăна ĕнер кăна туса пĕтернĕ.
Пăхсассăн куçăм алчăрса каять,
Тăрри хĕвел пек ялтăрса тăрать,
Тен, тăррине хĕвелпеле виттернĕ?

Мĕн чухлĕ халăх тухнă хулана,
Кашни тумланнă уяври пек капăр...
Кĕçех хыçра,—те чăн, те туйăнать,—
Чăваш сасси кĕрет ман хăлхана:
„Атя, эппин, кино кайса куратпăр".

Эп çаврăнатăп. Икĕ хĕр умра.
Паллашнă май, хаваслăн алă пачĕç.
Вĕсем ĕçлеççĕ аслă Мускавра:
„Çӳлĕ çуртсем тăватпăр-çке ара",—
Хăйсем йăл кулчĕç, çурт çине кăтартрĕç.

Епле аван Мускав урамĕнче!
Йĕри-тавра эп савăнсах сăнатăп.
Мускав урамĕсен ирĕкĕнче,
Телейлĕ, туслă халăх хушшинче
Çĕршывăм тăрăх утнă пек пыратăп.

## ÇУРАЛНĂ ÇĔРШЫВРА

Мăн Атăлра выляççĕ хумĕсем,
Тен, çыранне сарасшăн кунсерен.
Хĕвелĕн капăр, йăлтăр шевлисем
Шыв çийĕнче ташлаççĕ чӳхенсе.
Анать шур пăрахут Мускав енчен.
Хуллен шăваççĕ çăмăл кимĕсем,
Кимми çинче хавaслă çамрăксем.
Ман çĕршывра вăл—çакă илемсем!

Садсем! Садсем шап-шурă çеçкере,
Пĕркеннĕ, тейĕн, шурă пурçăнпа.
Пыл хурчĕ, ав, çеçке çинче çӳрет,
Тăрас килмест пуль ун та вĕллере...
Юрлать-çке шăпчăк янкăс сасăпа.
Вăш-вăшăл çил ачашласа вĕрет,
Туратсене лăпкать, чӳхентерет.
Ку ман çĕршывăм канлĕн ешĕрет!

Уй-хирĕм аслă тинĕспе пĕр тан,
Утса тухаймăн унăн хĕррине.
Тӳпенелле кармашнă сĕм вăрман,
Çап-çутă кӳлĕ курăнать таçтан.
Ĕçе халь кӳлнĕ тулăх шывсене,
Турбинăсем çавраççĕ пур вăйран;
Ильич çуттийĕ сӳнмĕ нихăçан.
Çак тулăх çĕр вăл—ман çĕршывăмра!

Çĕр айĕнче чупаççĕ поездсем,—
Кунта тĕнче курман илемлĕхсем!
Çĕршывăмри чи харсăр маттурсем
Йăл çăлтăр çакнă кăкрисем çине.
Ӳсеççĕ капăрланнă хуласем,
Хула сăнне илеççĕ ялĕсем.

Мухтав та чыс хастар йышсен ёçне!
Ман çĕршывра вăл—çак маттур çынсем.

Мăнаçлă, аслă çĕрĕн варринче
Телей хули—Мускавăмăр ларать,
Хăй хӳттинче пире вăй-хал парать.
Тупа тăватпăр унăн умĕнче
Пулас хĕрӳ кунсемшĕн яланах.
Çап-çутă çăлтăр мăн Мускав çинче—
Çав çăлтăр ман çĕршывăмра кăна.

## МАЛТАНХИ КУН

Пире кĕтсе эс ывăнтăн та пулĕ—
Ăс-хакăл çурчĕ—институтăм.
Паян пуçланчĕ çĕн вĕренӳ çулĕ,
Паян каллех санпа тĕлпултăм.

Юлташăмсем чупса кăна çӳреççĕ,
Пĕрне-пĕри параççĕ алă.
Питсем хĕвеллĕ кун пекех çиçеççĕ...
Таттисĕр уçăлать-çке алăк.

Пĕри кĕрет, тепри тухать васкавлăн,
Пĕр-пĕринпе шав калаçатпăр.
Коридорта халь уйрăмах пит шавлă,
Анчах эпир ăна туймастпăр.

„Туртса ярсам,—пирус сĕнет юлташăм,—
Каникула мĕнле ирттертĕн?"
„Начарах мар... Начарах мар пек хамшăн".
„Çапла. Çыру çырса пĕлтертĕн"...

Ак янăрарĕ шăнкăрав хаваслăн,
Пире вăл саламларĕ мар-и?
Вĕренӳ çулĕ пирĕнпе тăванлăн
Халь парта хушшине-çке ларĕ.

Эпир класа кĕрсе ларатпăр шăппăн.
Стена çинче çулпуç портречĕ.
Ун куçĕсем пире сăнаççĕ лăпкăн,
Вĕренес ĕмĕт çирĕппĕн çĕкленчĕ.



# ТУСЛĂХ

## ПРОФЕССОР

Вăл пырса тăчĕ кафедра умне.
Пĕр саманта вăл ним те шарламарĕ,
Хăйне тăван аудиторине,
Куçне илмесĕр, кăмăллăн сăнарĕ.

Унтан кĕç, сывлăх сунчĕ те пире,
Хуллен пуçларĕ лекци вуламашкăн.
Кайран вăл хĕрсе кайрĕ чĕререн,
Ёлкĕр кăна конспект çырса пымашкăн.

Эс тимлесех итлен ун сăмахне,
Студентшăн ун кашни сăмахĕ ылттăн.
Итле, итле, ăнлан ун шухăшне.
Кайран ĕçре хĕрÿ экзамен тытăн.

Профессор çÿçĕ юр пекех шап-шур,
Ун пĕркеленнĕ сăн-питне куратăн.
Çавах унра чăн çамрăклăх, вăй пур,
Ăна куçран пĕрре пăхсах туятăн.

Профессорăм, тавах, тавах сире!
Пире мĕн чухлĕ эсĕ ăс паратăн.
Пурне те сăмаху çĕклентерет.
Пирте кун-çулăн чыслăхне куратăн.

Эпир кĕçех тухатпăр вĕренсе,
Институтпа кĕçех сывпуллашатпăр.
Эсир пире савса вĕрентнисем
Хĕрÿ ĕçре вăй парасса шанатпăр.

## АСА КИЛЕТ...

Аса килет, аса килет-çке ялăм,
Куçăм умне тăван уй-хир тухать.
Вара мана çунатлă чунхавалăм
Ĕмĕтпеле шав ялалла туртать.

Чунтан чĕнет пек савнă ял: „Килсемччĕ,
Хир тунсăхлать, маттурăм, сан пирки.
Çуллахи каç,—туйсамччĕ эс, сиссемччĕ,—
Сана куç хĕсĕ Малтикас пики“.

Чăн, тунсăхлать пуль сарлака уй-хирĕм,
Ăна эп савнă аннепе пĕр тан.
Асра упранă савнипе каç-ирĕн
Унта тĕлпулăп эп каникулта.

Тăван уй-хир, ан тунсăхла тархасшăн,
Яла эп пырăп вĕренсе тухсан.
Сана татах илемлĕрех тăвасшăн
Эп вĕренетĕп мар-и тăрăшса.

Ял-йышăмсем сума суса ăсатрĕç:
„Вĕрен, Якур, çанталăка тĕпче.
Вĕреннĕ çын ăна йĕлт пăхăнтарĕ,
Вăл таятех пуçне çын умĕнче“.

Чун-чĕререн сире эп тав тăватăп,
Ăшă сăмах çынна ялан çĕклет.
Чăн-чăн совет студенчĕ пек калатăп:
„Ман сирĕнпе халь ăмăртас килет“.

Вĕренӳре ялан малта эп пулăп,
Бригада ман кая юлман нихçан.
Эсир хирте ӳстерĕр тыръ-пулă,
„Отлично“ тетĕр çын пĕрре пăхсан.

Аса килет, аса килет-ҫке ялӑм.
Куҫӑм умне тӑван уй-хир тухать...
Халь ҫавӑнпа та ручка тытнӑ алӑ
Ыран валли тепӗр конспект ҫырать.

* * *

Ăçта эсир, кăвак куççем?
Мĕн-ма пăхмастăр ман çине?
Инçе-инçе иккен вĕсем,—
Çавах тухаççĕ куç умне.

Эс кайрăн çĕнĕ ГЭС тума,
Эс кайрăн Сталинград енне.
Çăмăл пулмарĕ уйрăлма,—
Эп юлтăм парта хушшине.

Ăсатрăм ырă çул сунса:
„Ĕçре çитĕнӳсем эс ту...
Самантлăха йывăр пулсан,
Вăй патăр хамăр юрату“.

Ларатăп халь институтра,
Профессор лекцисем вулать.
Савниçĕм, эс çак вăхăтра
Хĕрӳ ĕçлетĕн пулмалла.

Кăçал пĕтерĕп институт,
Тӳрех эп пырăп сан патна.
Вара сан кăмăллă яту
Ĕçре вăй парĕ-çке мана.

Ĕçчен çын ĕмĕр мухтавра,
Мĕскер тумасть-ши ун алли?!
Çавна пулах ман çĕршывра
Пур ырлăхсем ăна валли.

Çывхарĕç эп кĕтен кунсем,
Эп çитĕп Сталинград енне.
Унчух кăвак, кăвак куççем
Ачашшăн пăхĕç ман çине.

## ТУСЛĂХ

Юлташăм ман çуралнă Грузире,
Эп хам çуралнă Атăл хĕрринче.
Çавах никам уйăраймасть пире:
Эп унăн — шăллĕ, вăл — тăван пичче.
Ялан пĕрле çӳретпĕр унпала,
Вĕреннĕ чух та иксĕмĕр пĕрле.
Пире курсан чăнах савăнмалла:
Пĕр аннерен çуралнă темелле.
Эпир туссем!
Уйăрас çук пире!
Эпир пурнатпăр йышлă çемьере.
Çемье тени аттесĕр мар вăл, тус,
Чăн çемьере пур çирĕп юрату.
Ахальтен мар савса мĕн пĕчĕкрен
Аттемĕр Сталин ӳстерет пире.

1952

## СТУДЕНТ САМАХĔ

Ман питĕ лăпкăн калаçас килет,
Анчах чĕрем епле-ха лăпкăн таптăр:
Корейăра пăшал сасси кĕрлет,
Унта çынсем юн тăкнине куратпăр.

Мул хуçисем тискер Уолл-стритра
Пур тĕнчене пăхăнтарма шутлаççĕ.
Пур халăх миршĕн тăнă вăхăтра
Вĕсем çĕн вăрçăшăн кăшкăрашаççĕ.

Анчах астуччăр Нюренберг судне!—
Тет вĕсене паян ĕçчен китаец.
Кореец манмĕ çĕрĕ çуннине,
Кореецсем тăшмансене пуç таймĕç.

Çĕршывăм ман—хĕвеллĕ сад пахчи,
Эпир ăна куç шăрçи пек упратпăр.
Мухтавлă халăх—çавă сад хуçи,
Вăр-хураха унта кĕме памастпăр.

Хурахсенчен шикленес çук тĕнче.
Мĕльюн-мĕльюнăн миршĕн ал пусаççĕ.
Тăван Мускавăн ирĕк хӳттинче
Ĕçчен çынсем пĕр шухăшлăн тăраççĕ.

Шанатăп эп: мир пулĕ тĕнчере!
Эп çавăнпах халь лăпкăн вĕренетĕп.
Тăп-тăрă та хĕвеллĕ тӳпере
Хура çăхан вĕçеймĕ ĕмĕрне те.

## СТУДЕНТСЕН ЮРРИ

Ирччен янратăр, юхтăр янкăс юрă,
Ирччен янраччăр ташă кĕввисем!
Тата хăçан, хăçан эп сире курăп,
Пĕрле вĕреннĕ çывăх юлташсем?
    Ман çывăх юлташăм,
    Пуçлар пулĕ ташă,—
    Хавас кĕвĕпе çаврăнар.
    Эпир тăрăшман-и,
    Экзамен тытман-и,—
    Халь пурте пĕрле савăнар.

Сывпул эппин, юратнă институтăм!
Ыран эпир каятпăр инçене.
Чĕресенче телейлĕ, ырă туртăм:
Часрах тăрасчĕ, тетпĕр, ĕç умне.
    Хаваслă тус-йышăм,
    Тăратпăр пĕр йышлăн,
    Мухтатпăр çулпуçăн ятне.
    Кун-çулăмăр ирĕк,
    Чĕремĕрсем çирĕп,
    Тĕллев—коммунизм патне.

Кашнин пур хăй юратнă, савнă вырăн,
Çĕклентерет вăл пирĕн кăмăла.
Пиртен пĕри—хирте ўстерĕ тыră,
Тепри—пĕвелĕ анлă Атăла.
    Çамрăклăх—харсăр,
    Ĕçе йăлт тумасăр,
    Нихçан чакас çук каялла.
    Пулас çутă куншăн,
    Килес çутă куншăн
    Патваррăн утар малалла.

Çĕршывăмăр савса ăс-хакăл пачĕ,
Хастар пулма вĕрентрĕ кунсерен;

Ун иксӗлми, ун çирӗп вăй-хăвачӗ
Ялан упранӗ пирӗн чӗрере.
Хаваслă тус-йышăм,
Тăратпăр пӗр йышлăн,
Мухтатпăр çулпуçăн ятне.
Кун-çулăмăр ирӗк,
Чӗремӗрсем çирӗп,
Тӗллев—коммунизм патне.



# ТĂВАН ЯЛТА

## ЯЛА ТАВРĂНСАН

Тăван ялйыш, мана ўстернĕ ял,
Каллех тăратăп сирĕн умăрта.
Тĕлпулсанах кашни парать-çке ал,
Кашни вара Мускав çинчен ыйтать:

„Каласа пар, епле халь Мускавра?..
Эс пулнă пулĕ,—теççĕ,—парадра,
Тен, эсĕ иртнĕ Сталин умĕнчен,
Пур халăхпа, хавас уявсенче?..“

Итлеççĕ пурте кăмăллăн мана:
„Эп курнă,—тетĕп,—аслă Сталина.
Пурин çине те вăл савса пăхать,
Хуллен кăна аллипеле сулать.
Йĕри-тавра тăраççĕ илтĕнсе:
„Атте... Аттемĕр! Сталин!“—тенисем“.

Тăнлаççĕ тимлĕн манăн ялйышсем,
Телей вылять вĕсен сăнĕсенче.
Тен, ĕмĕтпе халь кашниех вĕсем
Иртеççĕ пуль çулпуç çывăхĕнчен.

Çĕршыв чĕри инçе-çке пирĕнтен,
Çавах та çывăх халăх чĕрине.
Çынсем илтеççĕ аслă Кремльтен
Чуна çамрăклатан сăмахсене.

„Тен, пĕлтерен татах çĕн хыпарсем,
Мĕнле-ха çав чума-генералсем?
Вĕсем, çĕлен пек, юншăн ăванса,
Пуçласшăн, имĕш, атомлă вăрçа?“

— Тăван ялйыш!
Шавлаччăрах вĕсем.
Пушă пичке ялан шав кăларать.

Вăрçа чунпа сивлет ĕçчен этем,
Вăл миршĕн çирĕп ĕçпеле тăрать.
Этем савать хĕвеллĕ кунсене,
Хĕрӳ ĕçре туптать пуласлăхне.

„Аван, аван,—тет Михаля мучи,—
Тавтапуçах сан ырă сăмахна...“
Епле ачашшăн ачашлать ăш çил
Яштак та йăрăс шурă хурăна.

„Кала, эппин, епле ху вĕренен?
Ямастăн пулĕ, тетĕп, ял ятне.
Института мухтавлăн пĕтерсен,
Ăçта пуçласшăн пурнăçăн çулне?“

— Тăван ялтан эп каймăп инçене,
Мана валли кунта та ĕç нумай...
„Паллах, паллах... Ялта та инженер
Хальхи кунра пултарĕ тем тума.“

Епле пит ăслăн калаçать мучи!
Вăл ĕненет, пуласлăха шанать...
Ĕрĕхтерсе кăна ачи-пăчи
Туран хаваслăн выляса анать.

Тăван ял-йыш, мана ӳстернĕ ял,
Эп сирĕнпе, эп сирĕнпе, çумра.
Манра çĕкленчĕ иксĕлми вăй-хал,—
Хĕрӳллĕ ĕç кĕтет пире умра.

1952

## АННЕ

Хӗвел ансан вӑл таврӑнать киле,
Кил хушшине йӑлтах типтер кӗртет.
Вара „Кӗске курс“ кӗнеке илет:
„Хал пур чухне кӑшт вӗренем-ха,—тет.

Тӑван ҫулпуҫ ҫак ыр кӗнекене
Йӑлтах-ҫке ҫырнӑ хӑйӗн аллипе.
Епле вӗренмӗн унӑн сӑмахне,
Кашни сӑмахӗ ҫутӑ хӗвел пек.

Кашни сӑмахӗ—пурӑнӑҫ тӗвви.
Кунта пӳлас хастар кунсен кӗвви.
Пӗлес пулать-ҫке парти кун-ҫулне,
Чухлаймӑн унсӑр ҫӗнӗ кун вӑйне“...

Ларать вӑл шӑппӑн-шӑппӑн вуласа,
Хӑшпӗр чухне хӑйпе хӑй калаҫать.
Кашта ҫинчи автанӗ авӑтсан,
Хӑй вырӑнне канма кайса выртать.

Тӑван анне!—епле ачаш сӑмах,
Епле вӑл ҫывӑх пирӗн чунсене.
Эп уншӑн кӗрӗп чӑрсӑр ҫулӑма,
Ҫавах та упрӑп унӑн сывлӑхне.

Мӗн пӗчӗкрен пире ачашласа
Вӑл ӳстерет, йӑвашшӑн лӑпкаса.
Юрла-юрла вӑл сиктерет сӑпка
Кӗрхи чи вӑрӑм, тӗттӗм каҫсенче.
Е сиктерет кӗҫ хыттӑн утьӑкка
Хӑйӗн ҫемҫе, ҫемҫе алли ҫинче.

Эс йӑл кулсассӑн ун ытамӗнче,
Пӗрремӗш хут кулсассӑн сасӑпа,—

Тăван аннӳн телейлĕ чĕринче
Вăй-хал çĕклетĕн хăвăн куллупа.

„Анне“ тесе эс каласан малтан,
Мĕнле хаваслăх пулĕ аннӳне?!
Кӳрше кайсан вăл е яла тухсан
Каласа парĕ эс калаçнине.

Пире вăлах-çке вĕрентет хуллен,
Алран тытса, урайĕнче утма.
Малтан ярса пусма та шикленен,
Тен, хуçăлать кĕç ху тăран хăма?

Çапла анне пире йăлт вĕрентет.
Маттур ӳссен епле вăл савăнать!
Çампах мĕн ĕмĕр тăршшĕ пирĕнте
Ун ячĕ çирĕп упранса тăрать.

Ахальтен мар пуль пирĕнтен кашни
„Анне“ тесе чĕнет çĕршывăма.
Çавăнпала-çке ман çĕршыв çынни
Ик сăмаха нихçан та уйăрмасть.

## УРАМ

Умра урам.
Ик енӗпе шур хурӑн
Тата илемлӗ йӑрӑс топольсем.
Хулари евӗр тротуар та курӑн,
Утма кӑна, юлташ, ан ӳркенсем!

Хыр юпасем йӗркепеле ларӑççӗ,—
Пӑралуксем янраççӗ хӗлӗхле.
Ахальтен мар ялта халь мухтанаççӗ:
„Пӳртрех çутатпӑр çутӑ хӗвеле“.

Хула урамӗ евӗр ял урамӗ,
Пӗрпек çуртсем, çӗнӗ çуртсем умра.
Çакна курсассӑн, кам чунтан юрламӗ,
Ӗçчен çын ӗмӗр тивӗçлӗ юрра.

## КЛУБ УМĔНЧЕ

Кермен пек клуб ларать ял варринче,
Шап-шурă хурăнсем йĕри-тавра.
Ыр кăмăллăн пăхса, ун умĕнче
Тăван çулпуçăн статуйи тăрать.

Тăрать вăл лăпкăн алă çĕклесе,
Кĕçех сăмах калассӑн туйăнать.
Çывăхĕнче ӳсеççĕ чечексем,
Пуçне таяççĕ, çил вĕрсен, ăна.

Пурне те витĕр куракан куçпа
Сăнать вăл ман ялйышăм пурнăçне.
Шап-шурă хурăн симĕс çулçăпа
Ӳкернĕ лăпкă сулхăн ун енне.

Ялйыш тухать-и сарлака хире—
Иртсе каять çулпуçĕ умĕнчен.
Сунатпăр сывлăх.
Вăл сунать пире—
Çĕнтерӳпе кĕме тăван хиртен.

1952

## ЮХАНШЫВ

Эп астăватăп: çуркунне çитсессĕн,
Шыв, çыранран та сарăлса тухса,
Шав-шавласа, кĕр-кĕрлесе, çиллессĕн
Юхатчĕ хулăн пăр хăваласа.

Ун юхăмне никам та пӳлейместчĕ,
Вăл хăй хуçа,—çул хывнă малалла.
Капмар чулсем ванатчĕç, тĕпренетчĕç,
Юхса каятчĕç чăрсăр шывпала.

... Паян эсир юханшыва курасчĕ!
Çын улăштарнă унăн пурнăçне.
Ун иксĕлми, ун чăрсăр вăй-хăвачĕ
Халь пăхăнать ял-йышăн шухăшне.

Ак, каç килет. Хумсем çинче выляççĕ
Ытарайми илемлĕ шевлесем.
Шевлесем мар йăлтăртатса çунаççĕ,
Çунаççĕ Ленин çутнă çутăсем.

Тăван ялта тĕттĕм каçсем çухалчĕç,
Каçсем те халĕ кăнтăр кунĕ пек.
Хыр юпасем йăлтăртатса çуталчĕç
Хăйсем çинчи çавра лампisемпе.

Çыр хĕрринчен юхса каяççĕ шавлăн
Хир варрине тӳп-тӳрĕ канавсем.
Хир хумханать, хир хумханать мухтавлăн,
Пăшăлтатаççĕ тутă пучахсем.

Паян эсир юханшыва пăхсамăр,
Пире парать вăл хăйĕн хăватне.
Пур ырлăха эпир тăватпăр хамăр,
Утатпăр коммунизм патне.

## ВОДОПРОВОД

Эп астăвап: ирех тăратчĕç
Хĕрарăмсем хĕрӳ ĕçе,
Ĕне сăватчĕç, вут хутатчĕç,
Каятчĕç шыв ăсма кĕçех...

Анчах çăлкуç патне анмарĕç
Паян вĕсем витре çакса.
Çăлкуçĕ тăлăххăн шавларĕ
Валак çинчен шыв юхтарса.

Мĕскершĕн тăлăха вăл юлчĕ?
Мĕн пулчĕ ял çыннисене?
„Халь савнă ял хула пек пулчĕ,—
Тесе мучи хаваслăн кулчĕ
Якатнă май шур сухалне.—

Ман пӳртĕме эс кĕрсе кур-ха,
Ман пӳртĕмре çăлкуçĕ пур халь!
Крана уçса ярать те арăм,
Вара таса та уçă шыв
Шăнкăртатса юхать пĕр ярăм,—
Кун пек ансат ĕç мĕн пур-ши?“

Епле-ха савăнмасăр тӳсĕн?!
Водопровод-çăлкуç пӳртре!
Ман тăван ял татах та ӳсĕ,
Ял илемленĕ кунсерен.

## ЮРАТУ

Ешĕл тумлă çуркунне çитсессĕн,
Çĕмĕртсем çурсассăн çеçкине,
Улăх чечекпе эрешленсессĕн
Е илтсессĕн кайăк юррине,—
Хăвăн чĕрӳнте туятăн эсĕ
Юрату хуллен çуралнине.

Вăйăра ян-янратса юрлатăн,
Алран-алă тытăнса тăрсан.
Ташă пуçласан, хĕрсе ташлатăн,
Çăмăллăн кăна тăпăртатса.
Кăмăллană хĕр-тусна куран та
Асатма каятăн савăнса.

Ирхине тăван хире тухсассăн
Ăмăртса ĕçлетпĕр ушкăнпа.
Çил юхса килет те кассăн-кассăн
Выляса иртет-çке пучахпа.
Чĕререн хĕрӳ ĕçе савсассăн,
Ĕç туслашĕ ĕмĕрлĕх санпа.

Ку мĕскер-ха? Чăн юрату мар-и?
Мĕншĕн чунăм туртăнать хире?
Иксĕлми хастарлăхăн кăварĕ
Хал парать кунтан-кунах пире.
Тусăмсем, ĕç юррине юрлар-и,
Ĕç юрри вăл—туслăх юрри мар-и,
Юратма чĕнмест-и чĕререн!

## САД ПАХЧИ

Юхса килет те ăшă кăнтăр çилĕ
Çулçăсемпе хуллен пăшăлтатать.
Çулçи чĕнет: „Пыл хурчĕсем, эй, килĕр,
Çеçке çинчен пыл пуçтарма сада!“

Эх, сачĕ çав! Тин çунă юр пек шурă.
Яш-кĕрĕме тăрать вăл илĕртсе:
„Хĕр-каччăсем, килсемĕр, килсе курăр,
Сирĕнпеле юрласшăн кайăксем“.

Утатăп эпĕ тӳрĕ сукмак тăрăх,
Çурхи тумпа пĕркеннĕ-çке çĕршыв.
Тӳпе çăл шывĕ евĕрлех тăп-тăрă,
Тавралăхра—ачаш чечек шăрши...

Умра бинт çыхнă капăр турат вĕçĕ,—
Сăнав тумашкăн çыхнă пулмалла.
Çапла чăн-чăн мичуринецсен ĕçĕ:
Чечек чунне йăлтах ăнланмалла.

Çанталăка тĕпчес пулать канмасăр,
Çын хушнине итлетĕр вăл йăлтах.
Халь çавăнпа, хĕл сиввине туймасăр,
Виноградсем ӳсеççĕ-çке кунта.

Ахальтен мар хастар çынсен ыр ячĕ
Мускав таран тăрать-çке илтĕнсе...
Чечекленсем эс, ешĕр, колхоз сачĕ!
Сĕткенлĕ пулччăр тутлă çимĕçсем.

## ТĂРИ

Çуркунне. Шыв-шуртан тасалман-ха çĕршыв,
Шурă юр юхтарать юлашки куççульне.
Çав-çавах таврана ăшăнан çĕр шăрши
Вăшăл-вăшăл çилпе саланать инçене.

Йăмрасен тăрринче кураксен йăвисем,
Кашни кил умĕнчех шăнкăрчсен вĕллисем.
Тăри çеç тӳпере чарăнмасăр юрлать,
Йăвине çавăрма васкамасть пулмалла.

Çĕр типсессĕн тухаççĕ çынсем акана,
Тырă-пулă хире акăнать, акăнать...
Тăри çеç тӳпере шăрать юррине,
Çавăрма васкамасть пулмалла йăвине.

Уй-хир симĕс тумпа, кашмапа витĕнет,
Тăр-тăри юрлани çав-çавах илтĕнет.
Тусăмсем, ун йăви калчасен хушшинче,
Юрласа ĕçлет мар-и вăл кун каçиччен.

Вĕççĕр-хĕрсĕр уй-хир сарă тум тумланать,
Хир карапĕ-комбайн ĕçлеме тытăнать,
Çав-çавах тӳпере çаврăнать-çке тăри,
Çилпеле таврана саланать ун юрри.

Мĕн çинчен вăл юрлать? Ма ырмасть юрласа?
Ун юрри янăрать хирте ĕç пĕтиччен.
Ман шутпа вăл юрлать ĕçчене мухтаса,
Колхозри ĕç çинчен, тулăх тырă çинчен.

## ÇИЛСЕМ

Уй-хирĕме эп тухрăм юлташпа,
Йĕри-тавра ытарайми инçет.
Ырашĕ вăрăм, тутă пучахпа
Хулпуççирен ачашшăн сĕртĕнет...

Нумай пулмасть çак сарлака уйра
Ӳсетчĕ армути те хытхура.
Шăрăх кунсем çитсессĕн çывхарса,
Хирте ăрша тăратчĕ выляса.

Вĕри çилсем килетчĕç инçетрен,
Ĕнтсе яратчĕç акнă тырпула.
Уйсем-хирсем, тухса пăхмассерен,
Хуçатчĕç пирĕн шухăш-кăмăла.
Килетчĕ ир. Çавах та ирхине
Ӳкместчĕ сывлăм типнĕ çĕр çине.

... Тăван хирте йăлт урăхла паян,
Кунта ачаш çил вĕрнине туян.
Куç умĕнче вăрман йăрăмĕсем,
Тӳпенелле кармашнă-çке вĕсем.

Сар тум тумланнă сарлака уй-хир
Выртать халь канлĕн, лăпкăн хумханса.
Утса пыратпăр савăнса эпир,
Тавралăха ытарайми пăхса.

Ыраш пучахĕ икĕ шит таран,
Ăна туни епле чăтса ларать?!.

Атăлпа Дон ал пачĕç пĕр-пĕрне
Çеçенхирте хум кустарать çĕн тинĕс.
Тек вĕри çил çитеймĕ ку енне,
Тырпулсене, ăрша, ĕнтеймĕн тин эс...

Куратăн пуль, хастар юлташăм ман:
Çилсем çынна пуçларĕç пăхăнма.

## КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔ ХИРТЕ

Хир варринче тăрать вăл пĕчченех,
Тырпулăсем ун пĕвĕнчен те çӳлĕ.
Сап-сарă хум чупать пит инçене,
Тен, вăл шырать халь хăйĕн çыранне...
Хир тинĕс пек илемлĕ, килĕшӳллĕ.

Пăшăлтататççĕ пучахсем хуллен,
Кашни пучахĕ тем каласшăн, тейĕн.
Вĕсен шавне кăшт ăнланас тесен,
Хирте ĕçлес пулать-мĕн кунсерен,—
Ахаллĕн ним те ăнланса илеймĕн.

Ыраш пусси:—вырма юрать пуль,—тет,—
Тулли вара кăшт тăхтама хушасшăн.
Сип-симĕс вир кĕр çитессе кĕтет,
Пăтă пулса вăл тутлăн пăсланасшăн.

Пĕр пучаха хуллен илет татса,
Ывçи çине ăна хурать типтерлĕн.
Эх, пĕрчисем! шултра та тап-таса,
Кăна ялйыш, тăван ялйыш ӳстернĕ.

Пĕрчĕсене çӳлтен хĕвел сăнать:
„Ман тĕслĕ мар-и ку?"—тесе ыйтасшăн.
Çав вăхăтра пĕлĕт хуплать ăна;
„Çумăр пĕрчи пекех",—тесе каласшăн.

Тăван ялйышăм çуркунне çитсен
Хĕвелпелех тăрса хире тухатчĕ.
Çĕре машинăпа типтерлесе,
Ĕç юрринче мухта-мухта юрлатчĕ.

Ак председатель утрĕ малалла,
Хир хумханать, уй-хирĕн çук пуль вĕçĕ.

Вăл шухăшлать: „Вырма кĕç тухмалла...
Ытти çинчен сӳтсе явасчĕ кĕçĕр“.

Çарпуçĕ пек сăнать вăл таврана,
Ун куçĕсем хире йăлт ытамлаççĕ.
Тырпул хуллен çеç сĕртĕнет ăна,
Пучахĕсем пите лексе лăпкаççĕ.

Пучахĕсем çав! Тутă пучахсем
Хур măйĕ евĕр авăнса тăраççĕ.
Маттур, маттур ман ялăмйышăмсем,
Пĕр тытăнсан мĕскер кăна тумаççĕ?!

Вăл савăнать—хастар çĕршыв сынни:
„Эпир вырмашкăн тухăпăр нумайăн“...
Хăйне те çав ялта савса кашни
Чĕнет-çке халь: „Василь Иванч Чапаев“.

Ялйыш пĕлет, ялйыш вăл ăнланать,
Унра пурах Чапаевăн хастарĕ.
Вăл халăх ĕçĕшĕн чунне парать,
Ĕçчен çынсем те уншăн чунне парĕç.

... Хĕвел тухман-ха. Эрнерен хире
Тăван ял тухрĕ похода çĕкленнĕн.
Комбайн сасси ир шăплăхне сирет,
Электрокомбайн уй-хире иленнĕ.

Мотор кĕрлевĕ, сар хĕрсен юрри
Инçе вĕçет, вĕçет халь çиле майăн.
Хăвăрт тапать Василь Иванч чĕри,
Куçсем кулаççĕ ялăмри Чапайăн.

## ПӖРРЕМӖШ КВИТАНЦИ

Итем ҫинчен вуникӗ грузовик
Пӗр харӑсах кӗр-кӗрлесе тапранчӗҫ.
Оркестр пек янрать мотор кӗвви,—
Ҫапла ҫӗн тырӑ хулана ӑсанчӗ.

„Телейлӗ ҫул, ҫӗн тыррӑмӑр сана!—
Тесе каларӗ манӑн ялӑмӗышӑм.—
Тӑван уй-хир ӳстернӗ ылттӑна
Ху пӳлмӳне, ҫӗршывӑмӑр, эс йышӑн.

Пиртен вӑл пултӑр чи паха парне
Ӑна чунтан хавасланса паратпӑр.
Ҫӗн стройкӑсем ӳстерччӗр хӑватне,
Сталинград ГЭС-ӗ хӑвӑртрах ҫутаттӑр".

Пырать колонна аслӑ ҫулпала,
Пуҫне тайса юлать хирти тырпулӑ.
Ҫӳл тӳпере япшар хӗвел кулать,
Вӑл пирӗн савнӑҫа ӑнланчӗ пулӗ.

Ак элеватор тухрӗ куҫ умне,
Хӑнасене вӑл тимлӗн кӗтет мар-и?
Унӑн сӑрпа сӑрланӑ хапхине
Ҫӗн тырӑ анлӑн, чыслӑн уҫса ярӗ.

Грузовиксем ҫитеҫҫӗ кӗрлесе.
Вӗсене хирӗҫ йышӑнма тухаҫҫӗ:
„Ҫӗн тырӑпа малтан килекенсем,
Салам сире!"—тесе халь саламлаҫҫӗ.

Колхозниксем пушатрӗҫ тырпула.
Алра пӗрремӗш, малтанхи квитанци.
Ҫӗклет вӑл пирӗн шухӑш-кӑмӑла.
„Эпир пӗрремӗш!"—тесе ял мухтанчӗ.

Тусан çĕкленчĕ аслă çул çинче,
Тулли лавсем килеççĕ пире хирĕç.
Чи ырă туйăм пирĕн чунсенче:
Хĕрӳллĕ те хастарлă кунсем çитрĕç.

## КОЛХОЗ ХАҪАЧӖ

Ман алӑра колхоз хаҫачӗ,
Вӗр-ҫӗнӗ номер алӑра.
„Вӑйлӑ тырпулшӑн“ унӑн ячӗ,
Эх, ячӗ кӑмӑллӑ вара.

Ку хаҫатра курма пултарӑн
Ёҫри маттур ҫынсен ятне.
Вӗсен халь ӗмӗт-шухӑш тарӑн,
Мала чӗнеҫҫӗ пӗр-пӗрне.

Кӑштах хыҫа юлас пулсассӑн,
Хаҫат ятлать те ӑс парать.
Е хӑшпӗри кӑшт йӑнӑшсассӑн,
Ёҫпе чӑна тухма хушать.

Кунта куран колхоз поэчӗн
Ёҫре ҫуралнӑ сӑввине.
Вӑл пурнӑҫа сӑнать, пӗлет-мӗн,
Туять ҫӗнни ҫӗнтернине.

Ахальтен мар пуль кунӗн-ҫӗрӗн
Хирте вӑл халӑхпа пӗрле.
Ун сӑввине ялти яш-кӗрӗм
Пӑхмасӑр калама пӗлет.

Кунта эс „Миршӗн“ сӑвӑ вулӑн:
„Мир ҫирӗпленӗ ӗҫпеле“...
Вӑл, кураймасӑр, пит хӑюллӑн
Пур чуниллисене питлет.

Хаҫатӑм—тӑван ял илемӗ,
Вӑл пурнӑҫра ҫул кӑтартать...
Ҫавна пулах аттемӗр Ленин
Ялан хакланӑ хаҫата.

## КОЛХОЗРИ РАДИО

Тăван ялйыш ĕçрен пушаннă хыççăн,
Каç пулттипе, сакăр сехет çитсен,
Эфир тăрăх ян-янăрать-çке уççăн
Пике сасси хаваслăн, чылайччен.

Ялйышăмсем ун сассине пĕлеççĕ,
Вăл хĕр ĕçлет вĕсемпеле ялан.
Ăна яшсем „куккук" тесе чĕнеççĕ
Сасси ытла илемлĕ пулнăран.

Хĕр калаçать. Унăн сасси мухтавлăн
Каять ял тăрăх ĕçченсен килне.
Итлеççĕ пурте ăшшăн, тараватлăн,
Вăл пĕлтерет чипер хыпарсене:

„Паян хирте, тăваттăмĕш бригада
Ăмăртура,—тет,—тухнă чи мала.
Ыран вĕсем ĕçлесшĕн ытларах та,
Ялав илесшĕн халь вĕсем алла...

Якур мучи итем çинче ĕçленĕ,
Тăват капан вăл тунă пĕчченех.
Паян ун тантăшĕ Хастар Иленĕ
Ыран улт-çич капан тума чĕнет."

Хĕр калаçать. Ăна итлеççĕ пурте.
Вăл пĕлтерет татах ыр хыпарсем:
„Ялти магазинра-çке пур,—тет,—
Хуçалăхра чи кирлĕ таварсем".

Унтан кĕçех ак çамрăксен сассийĕ
Пуçлать шăнкрав пек уççăн янрама.
Чĕре туллин халь савăнать кашниййĕ,—
Тăван ял хорĕ тухрĕ юрлама.

Тăван ялйыш, эсир епле телейлĕ!
Умри телей вăл сирĕн алăра.
Килес кунсен нихçан сӳнми хĕвелĕ
Ялан çутаттăр сирĕн çулăра!

* * *

Сана мĕнпе, мĕнпе эп танлаштарăп?
Танлаштармашкăн хĕн вăл юратсан.
Куçу сан тăрă кӳлĕ евĕр тарăн,—
Ман савнă ялăн хĕрĕ пулнăран.

Пиçсе çитейнĕ çĕр çырли пек пит сан,
Куçа илме май çук пĕрре пăхсан.
Мана йăлт тыткăнларĕ çавă пит-сăн,
Тен, хамăр ялăн хĕрĕ пулнăран?

Вăййа тухсан пуçлатăн янкăс юрă,
Ăмсанĕ юрăç вăйăра пулсан!
Сан сассу пек сасса илтмен эп урăх,—
Ман савнă ялăн хĕрĕ пулнăран.

Хире тухсассăн хир хуçи ку, тейĕн,
Ĕç савăнать, ĕç туслă санпалан.
Манпа эс ăмăртатăн—ман телейĕм,—
Ман савнă ялăн хĕрĕ пулнăран.

Кăкру çинче çунать сан Ылттăн Çăлтăр.
Яту сан паллă мар-и Мускавра?
Ĕçӳ, савни, кирек хăçан та ăнтăр!—
Тăван Çĕршывăн хĕрĕ пулнăран.

## ҪАҪЁ ЛАПКАН ҪИЛЧЁ...

Каçĕ лăпкăн килчĕ,
Каçĕ шăппăн килчĕ,
Сар хĕвел пытанчĕ сăрт-тусем хыçне.
Манăн савнă тусăм,
Манăн хура куçăм,
Хăвăртрах тухсамччĕ вăйă варрине.

Эп санпа хаваслăн
Утăп алла-аллăн
Хамăр такăрлатнă тӳрĕ сукмакпа.
Вăштăр-вăштăр çилĕ
Ăшшăн юхса килĕ,
Чечексем пуç тайĕç ăшă кăмăлпа.

Çурхи каç илемĕ
Тыткăна илет-мĕн,
Юратма хушать-мĕн каччă чĕрине.
Шăпчăксем юрлаççĕ,
Тен, вĕсем туяççĕ,
Тусăмçăм, сана эп ăшшăн савнине.

Тусăм, савнă тусăм, ĕмĕтĕм-çунатăм,
Ĕмĕр-ĕмĕр пулăн манпала çумра.
Юрату—телей вăл, эс ăна туятăн,
Юрату вăй-хал вăл пирĕн пурнăçра.

Каçĕ лăпкăн килчĕ,
Каçĕ шăппăн килчĕ,
Сар хĕвел пытанчĕ сăрт-тусем хыçне.
Ман чипер пикеçĕм,
Чĕвĕлти чĕкеçĕм,
Хăвăртрах тухсамччĕ вăйă варрине.

* * *

И, улми, сад улми,
Витĕр хĕрлĕ сад улми.
Пирĕн колхоз пахчинче,
Улма йывăç çийĕнче,
Симĕс çулçă айĕнче.

И, улми, сад улми,
Витĕр хĕрлĕ сад улми
Илем кӳрет йывăçне.
Хăйĕн тутлă шăршине
Салатать вăл ял çине.

И, улми, сад улми.
Эпир хамăр—сад улми.
Йăрăс пӳллĕ хĕрĕсен
Йăмăх хĕрлĕ пичĕсем—
Садри пиçнĕ улмасем.

* * *

Çуркунне, ем-ешĕл курăк
Сăрт-тусем çине витсен,
Вăйăра сана эп курăп
Каçсерен.

Çитĕнĕ сип-симĕс утă,
Савăнтарĕ халăха;
Санпала пĕрле эп утăп
Улăха.

Кăкăр çӳлĕш ӳсĕ тулă
Пирĕн аслă пусăра.
Санпала пĕрле эп пулăп
Вырмара.

Кĕркунне, сар ылттăн тырă
Пӳлмене кĕрсен, чăнах,
Сан аçу килне эп пырăп
Хăтана.

* * *

Тен, уççăн калама ватаннă,
Тен, эс те кĕтнĕ çак куна,—
Ху чĕрӳнте кăна упранă
Телей паран юратуна.

Хĕвел ансан, вăййа тухсассăн,
Эпир тĕл пулнă-çке ялан.
Эс килĕшсессĕн,—эп хавассăн
Сана ăсатнă вăйăран.

... Паян санпа пĕрле ларатпăр
Туй кĕрекийĕ хушшинче.
Куçран-куçа хавас пăхатпăр
Атте-аннемĕр умĕнче.

Ялйышăмсем пăхаççĕ мар-и
Пĕр сан çине, пĕр ман çине.
Хăват парать телей кăварĕ,
Çĕклентерет чĕресене.

Кĕç баянист тăсса ярать те
Кăçал туяннă баянне:
„Кам ташă пуçлĕ, кам пуçлать“,—тет,—
Хăй тапатех-çке урине.

Сиксе тухать пĕр çамрăк каччă,
Эх! çăмăл пултăрччĕ ури!
Хĕрсем хаваслăн ал çупаççĕ,
Такмаклама пуçлать пĕри:

„Тух, тух, ташша тух!
Купăсçи халь хамăрăн.
Ай-хай, юрату!—
Хыçран чупрĕç саккăрăн.

Тăпăр-тăпăр тăпăртат,
Юманран—урати.
Савни йăл кулса пăхать,
Ма тесен—йăпăлти“.

Ташшипеле йăлт тĕлĕнтерчĕç
Яш-кĕрĕмсем юлташăмсем.
Мучисене те çĕклентерчĕç
Хăйсен хавасĕпе вĕсем.

Сăра курки çӳрет черетĕн,
Эрех черкки каймасть алран.
„Пире савсан—тĕппи ĕçетĕн“,—
Тесе сĕнеççĕ кăмăлран.

Сыпма тăратăн: „йӳçĕ, йӳçĕ!“—
Шавлаççĕ ялăм-йышăмсем.
„Тутлантармасăр мĕнле тӳсĕн“,—
Шӳтлеççĕ чыслă мучисем.

Сана эп вăйă салансассăн
Киле ăсатнă, тусăм ман.
Калаçнă кăмăллăн, хавассăн,
Анчах та чуптума хăйман.

Пăхсамччĕ халь, умра пур халăх.
Çине тăрсах сăнать пире.
Чуптусанах параççĕ алă,—
Сунаççĕ: „Чыс, телей сире.

Эсир вăл ялăмăр илемĕ—
Ĕçре мухтавлă паттăрсем.
Сире пăхса халь кам киленмĕ?
Çиçеççĕ çеç орденăрсем“...

Эпир маттур халь, эпир сывă.
Эпир çĕкленнĕ ирĕкре.
Вăй-хал парать Тăван çĕршывăм,
Телей те хамăрпах çӳрет...
—„Чупту, савниçĕм, хĕрӳрех!“

* * *

Ăван колхоз уй-хирĕнчен килсессĕн,
Пырса ларатăн эс рояль умне.
Чӳречерен çил йăпшăнса кĕрсессĕн,
Суйлать хуллен чипер кăтрусене.

Чӳречерен урамалла вĕçеççĕ
Чуна илĕртекен ыр кĕвĕсем.
Пур кайăксем ун чух сана итлеççĕ,
Сан кĕвĕ май юрласшăн пуль вĕсем?

Сан пӳрнӳсем чупаççĕ чарăнмасăр
Хура та шурă клавиш çийĕпе.
Чипер пике, вылян эс такăнмасăр,
Пĕр такăнмасăр, пианистка пек.

Ăçтан çапла эс выляма вĕреннĕ?
Аçу-аннӳ те, ху та эс ялта.
Аçу сан ĕлĕк тарçăра ĕçленĕ,
Аннӳ те сахал мар юхтарнă тар.

Пĕлетĕп эп: аннӳ тĕрленĕ тĕрĕ,
Тĕрленĕ чух юрланă хурланса.
Вăййа тухсан та ялăмри яш-кĕрĕм
Ташланă, теççĕ, шăпăр каласа.

Паян санпа Чайковский туслă мар-и?
Вылятăн халĕ унăн юррине.
Сана пăхса, аннӳ хуллен каларĕ:
„Телей курмах çуралнă çĕр çине“.

Епле чăтайăп эп сана савмасăр?
Эс—ман телей, эс—ман умри илем.
Выля, савни! Выля пĕр такăнмасăр,
Янраччăр юратун ыр кĕввисем.

## КĔР ПУÇЛАМАШĔ

Епле чăтать-ши улмуççи турачĕ,
Панулмисем шултра та тап-таса!
Илемлĕн курăнать колхозăн сачĕ,
Асра тытмасть кĕр кунĕ пуласса.

Мухтавлă кĕр халь хатĕрлет вăрманшăн
Хăйне ялан килĕшекен тумне,
Йывăççене сар çулçăллă тăвасшăн
Евче ярать вăл шухă çилсене.

Сар лĕпĕш евĕр çăмăл, вĕлтĕр çулçă
Турат çинчен вĕçсе ӳкет çĕре.
Ем-ешĕл курăнать халь тулăх уçăм,
Сип-симĕс пурçăн витнĕ пек хире.

Хирте комбайн сассине илтеймĕн,
Хăлаçланмаççĕ çăмăл жнейкăсем.
Самантлăх хир ĕçне вĕçленĕ тейĕн,
Кĕркуннене хаваслăхпа кĕтсе.

Анчах хирте суратсене куратăп,
Халь илĕртет-çке вĕсене итем.
Йĕри-тавра ытарайми пăхатăп:
Кĕлте кӳме тухаççĕ маттурсем.

Тырпулă пулчĕ, пулчĕ савăнмалăх,
Мĕн чул капан колхоз итемĕнче!
Унта вĕркет ырми ялйышăм, халăх,
Ыраш çапать иртен каç пуличчен.

Çуллахи пек тӳпе тăрать-ха янкăр,
Çилсем вĕреççĕ сулхăн çурçĕртен.
Тулли кĕрекепе килет пуян кĕр,
Кĕр кунĕсем, салам сире пиртен!

## ЫВĂЛĔ

Ун ашшĕ вилнĕ вăрçăра,
Хăйюллăн, паттăр çапăçса.
Ун чух вăл выртнă сăпкара.
Йăл кулнă амăшĕ пăхсан.

Ывăлĕсем те хĕрĕсем
Телейлĕ пулччăрччĕ тесе,
Çĕршывăн паттăр çыннисем
Тăмарĕç пурнăç шеллесе...

Ачи ун çитĕннĕ. Паян,
Кĕнекесем тытса алла,
Хавасланса чупса каять
Ирсеренех вăл шкулалла.

Ун ĕмĕт пысăк. Шухăшра
Тăвать вăл чи хитре çуртсем,
Кĕç вĕçтерет вăл сывлăшра
Тăхлан витми самолетсем.

Шкул алăкне уçса паян
Кĕрет вăл çутă классене...
Вăл манмĕ ĕмĕрне, нихçан
Ун пурнăçне пур усалтан
Çăлса хăварнă ашшĕне.

* *
*

„Кама-ши хывнă çакă паттăр ывăл“,—
Тесе ыйтаççĕ час-часах çынсем.
Ав, урамра халь уçăлса çӳрет вăл,
Тавралăха сăнать хăй тимлесе.

Вĕреннĕ хыççăн кам-ха ăна чарĕ?
Вĕреннĕ хыççăн кăшт канни кирлех.
Ав, куратăр-и, тиха пек чупса кайрĕ
Юлташĕсем вылянă еннелле.

Тепĕр чухне ăна чĕнет те амăш:
„Ачам, кăшт вутă татар мар-и?“—тет.
Ачи нихçан та: „çук“,—тесе каламĕ,
Хавасланса пăчка алла илет.

Урай шăлма та ӳркенмест. Маттур вăл!
Çав пĕчĕк ĕç те—пулăшу килте.
Çынсем калаççĕ: „Чăн та, ăслă ывăл!
Ашшĕ пекех вăл“,—тенине илтен...

Ăçтан пурне те каласа пĕтерĕн,
Ăна валли тем те пĕр тупăнать.
Пĕрре мана: „Санран ыйтам-и,—терĕ,—
Пичче, ăнлантарса парсам мана?

Çынсем калаççĕ: халиччен нихçан та
Кунта ӳсместчĕ, теççĕ, виноград.
Вăл халь ӳсет-çке пирĕн пахчара та,
Кала-ха, ĕлĕк ма ӳсмен вара?“..

Эп ерипен ăнлантарма пуçларăм:
„Йăлт урăхланнă халь çĕршыв çынни,—
Унтан ăс илтĕр тенĕ пек каларăм,—
Çанталăка пăхăнтарать кашни“.

Вăл савăнса, телейлĕн кулса илчĕ,
Чи пысăк çын пек пăхрĕ ман куçран:
„Кунта, пиччеçĕм, виноград халь килчĕ,
Эп илсе килĕп ăшă кăнтăра“...

„Кама-ха хывнă çакă паттăр ывăл?“ —
Тесе ыйтсассăн, калăп çынсене:
„Ман шутпала, чăн-чăн çĕршыв ачи вăл,
Эп ĕненетĕп вăл каланине!“

## КОЛХОЗРИ ПАРИКМАХЕРСКИНЧЕ

Пухура çынсем каларĕç:
„Парикмахерски кирлех.
Ялăмăр çĕнелтĕр мар-и,
Пултăр-ха хула пекрех“.

Халь пыратăп васкамасăр
Парикмахерскинелле.
Тӳсме çук çав хырăнмасăр,
Сухалпа чуна темле.

Эп кĕретĕп. Парикмахер:
— Килех, кил,—тесе чĕнет,—
Те суя, те ял сăмахĕ,—
Сан çинчен хыпар çӳрет.
— Мĕн ара?—тесе ыйтатăп.
— Сан сухал хырмалла,—тет.

Кулса ячĕ пӳртри халăх,
Вăл кăна çаплах ĕçлет...
Усăлать те сăрлă алăк,
Пĕр мучи килсе кĕрет.

Вăл пурне те саламларĕ,
Сывлăх сунчĕ черерен,
Ларнă май сăмах пуçларĕ
Уй-хирти ĕçсем çинчен.

Ак ăна чĕнет тепри кĕç:
— Сан уру мĕнле чăтать?
Пур çĕре те утса çитĕç...
— Ман мотоциклет утать.

— Эс ватти,—тет,—килсе лар эс,—
Парикмахерĕ ăна.

Мучи тăчĕ те сăнарĕ,
Вара ларчĕ:—Тав сана.—

Çӳçе кас, сухала хыр-ха,
Духине те сапса яр.
Халь капла,—тет,—клуба пыр-ха,
Карчăк калĕ:—уйрăм лар.

Кунта пĕртте кичем мар-мĕн,
Пурнăç вĕресе тăрать.
Кĕтекен пуç усса лармĕ,
Вăл хаçат-журнал вулать.

Сухал хырчĕç, духи сапрĕç,
Мучи ăшшăн кулкалать.
Тăчĕ те чунтан каларĕ:
— Йĕкĕт пултăм, пулмалла...

Халь капла ман савнă карчăк
Паллĕ-ши клуба пырсан?
Хĕрсене çеç çаврас марччĕ.
Çук, эс, йĕкĕт, ан хурланччĕ.
Арăм та хĕр евĕр ман.

## ИРХИ ӲКЕРЧĔК

Хĕвел тухать яр уçă тухăçран,
Ылттăнласа çăкалăх кăтрине;
Илтетĕп эп саркайăк юррине,
Куратăп эп ем-ешĕл улăхра
Ахах шăрçа пек сывлăм çутине.

Садсем шап-шуррăн курăнчĕç умра,
Каç сапнă, тейĕн, кĕмĕл çеçкепе;
Çырма шавлать шăнкрав пек сассипе;
Чи ырă кăмăл çĕкленет чунра,
Йĕри-тавра пăхса савăннипе.

Кĕç юрă янраса каять вара:
Хĕвел çутатнă ялсенчен хире
Ĕçчен çынсем тухаççĕ ир-ирех;
Тыр хумханать куç виçейми уйра,
Унта мухтавлă ĕç кĕтет пире.

* * *

Юриех-ши шăпчăк ешĕл вăрманта
Чарăна пĕлмесĕр юрă шăрататъ.

Тен, сисет вăл манăн шухăш-кăмăла...
Улăха кĕçех ак тусăм тухмалла.

Эп ăна кĕтетĕп... Тусăм тухĕ ман.
Юратать пулсассăн тивĕç вăл тухма.

Çил кĕç пăшăлтатрĕ симĕс улăхра...
Тусăм, савнă тусăм ман умра тăрать.

„Савнă сар пикеçĕм, эсĕ тухрăн-и?..“
Улăх тăрăх кайрĕ каччă калаçни.

Çакă саманта эп усрăп асăмра,
Пурăнать халь тусăм манăн çуртăмра.

Вăл кунсем ăсанчĕç, юлчĕç хыçала...
Çакă улăх тăрăх таврăнап яла.

Мĕн ку? Асăрхарăм: улăх варринче
Каччă тăрать мар-и? Мĕншĕн вăл пĕччен?

Аса илтĕм хамăн иртнĕ кунсене:
Ман пекех кĕтет вăл савнă пикине.

Унăн тусĕ тухĕ симĕс улăха,
Чĕререн савсассăн вăл, паллах тухать.

Шухăшларăм: сӳнмĕ юрату нихçан,
Телей кӳрĕ ĕмĕр пирĕн пурнăçа.
Эп çӳренĕ вырăн пушă мар иккен,
Çĕнĕ мăшăр çӳрĕ алла-ал ирччен.

Çавăнпах-мĕн шăпчăк ешĕл вăрманта
Чарăна пĕлмесĕр юрă шăрататъ.

* * *

*С. Е.*

Ман чунра чи ăшă ырă туйăм,
Вăй-хăват парать вăл чĕрене.
Инçетре пулсан та, эсĕ туйăн
Эп калас ачаш сăмахсене.

Инçетре пулсан та, эсĕ курăн
Хуна çывăх-çывăх пит-сăна.
Çав сăнтан хакли сан çук пуль урăх,
Эп туятăп, тусăмçăм, ăна.

Ахаль мар-çке пилĕк çул кĕтетĕн.
Пилĕк çул!.. Каланă чух ансат.
Пилĕк çул ĕмĕтленсе çӳретĕн
Эп санпа кĕçех тĕлпулассa.

Тĕлпулатпăр! Ан хурланччĕ эсĕ.
Шантаратăп: ĕмĕрех—эп сан.
Ешĕл-симĕс çуркунне çитсессĕн,
Станцăна кĕтсе илме тухсам.

Тĕлпулу!.. Пĕр сăмах çеç пулин те,
Маншăн пин сăмах пек туйăнать.
Тĕлпулу!.. Ăна илтсен пурин те
Чĕрере ачашлăх çуралать.

Эсĕ манăн чĕрене вăй патăн.
Чăн пулма вĕрентрĕн пурнăçра.
Çавăнпах юратăва мухтатăп,
Сан çинчен юрлатăп юрăра.

Ман чунра чи ăшă ырă туйăм,
Чи телейлĕ юрату пуртан.
Инçетре пулсан та, эсĕ туйăн:
Яланах эп санăн çумăнта.

* * *

Хĕрупраçсем, тархасшăн ан кӳренĕр,
Ялан юрлатăп хам савни çинчен.
Пĕлетĕр-и, эп унпала çӳренĕ
Çуллахи каç колхозăн садĕнче.

Пĕлетĕр-и, савнин чипер сăнарĕ
Çурхи хĕвеллĕ кун пек туйăнать.
Чăн юратун нихçан сӳнми кăварĕ
Мана вăй-хал, телей парса тăрать.

Вăл сирĕнтен нимпе те уйрăм мар-тăр:
Вăййа тухать, ирех тухать хире.
Анчах мана, хĕрупраçсем, ан ятлăр,
Вăл халĕ маншăн чăн-чăнах хитре.

Хĕрупраçсем, эсир те юрататăр,
Сире те пĕр-пĕр каччă килĕшет.
Ун çине çеç ăшă куçпа пăхатăр,
Пăхатăр çав,—ăна кашни пĕлет.

Тен, сирĕн каччăр манпала пĕрех-тĕр,
Тен, ман пекех ĕçлет пуль колхозра.
Анчах эсир ăна çеç хисеплетĕр,
Сире вăл пуринчен те хаклăрах.

Саватпăр çавă кашниех хаваслăн,
Кун-çул илемĕ чăн юратура.
Çавна пулах юрлатăп уçă саслăн,
Çамрăклăха мухтатăп юрăра.

* * *

Манпала каллех пулмарăн эсĕ,
Пĕчченех эп пултăм вăйăра.
Яланах-çке, çуркунне çитсессĕн,
Савнă тусăм ир те каç уйра.

Эрнипех унпа тĕл пулаймастăп,
Тепĕр чух кăшт кӳренес килет.
Кӳренме май çук çав, ăнланатăп,
Çураки-çке, вăл чунтан ĕçлет.

Ак паян та унăн трактор шавĕ
Янраса каять таçта çити.
Пĕрле мар савни,
Çавах çумра вăл:
Авă трактор фарисен çути.

Çавă çутă ман сăна шыранăн
Уй-хир тăрăх çаврăнса çӳрет.
Трактористăм, савнă тусăм манăн,
Çитĕнӳ тусам хĕрӳ ĕçре.

Сан пата вĕçет-çке шухăш, тусăм,
Фарăсен çути те илĕртет.
Сывă пул. Ав, хăпарать те шуçăм...
Сана курăп, ирхине, хирте.

## ÇУРХИ ӐКЕРЧӖКСЕМ

1

Çырмасăр чун епле чăтма пултарĕ?
Тавралăха çывхарчĕ çуркунне!
Шап-шурă юр куççуль тăкать, мăнтарăн,
Шап-шурă юрăн халĕ хуйăх тарăн,
Вăл тӳсеймест хĕвел шевлисене.

Ача-пăча кĕреçепе тухать-и
Ян-янратма хавăслă урама.
Шăнкăр шыва çулсем уçса парать те
Ун çийĕнче вăл кимĕ юхтарать тек,—
Ăна, тен, урăх ним те кирлĕ мар.

Карти-карти хур-кайăксем иртеççĕ
Кикаклатса тăп-тăрă тӳпере.
Вĕсем те халь çур çитнине сисеççĕ,
Чĕп кăлармашкăн вăрттăн хӳтлĕхре
Çемçе йăва тума ĕмĕтленеççĕ.

Ĕрĕхтерсе, сикки сиксе чупаççĕ
Картиш тулли колхоз путекĕсем.
Çурхи кунсен илемĕнче выляççĕ,
Кĕç улăха тухассине туяççĕ,
Çаран çинче чупасшăн-çке вĕсем.

2

Каççеренех эпир вăйăа тухатпăр
Юр кайнă вырăна, сăрт çамкине.
Хĕрсем чечек пек, тумĕсем пит капăр.
Каччăйĕсем—эпир—кая юлмастпăр,—
Пĕрле тăратпăр вăйă картине.

Вархан сасси те калама çук янкăс,
Çурхи каçа канăç памасть, янрать.

Чун-чĕрере юратăва туян эс,
Хĕрсем ăна пĕрре пăхсах ăнланĕç,
Анчах сисмен пек пулĕç сан умра.

Вара калатăн: „Ăсатма пырам-и?
Шанатăп эпĕ... Хуçмăн кăмăла“.
Хĕр çав-çавах: „Атя“, —тесе каламĕ,
Малтан юри сан сăмахна ăнланмĕ,
Йăл кулĕ çеç, —вĕсен йăли çапла.

Çурхи ачаш çеçке пек тĕвĕленĕ
Чĕремĕрте хаваслă юрату.
Хĕр тусупа эс калаçса киленĕн:
„Чи çывăх, тейĕн, маншăн сан яту“.

Çут çуркунне, савăнтаратăн мар-и,
Вăратрăн мар-и ăшă туйăмсем?!
Чунра хĕмленчĕ юрату кăварĕ,
Хамра эп туйрăм хĕрӳ ĕç хастарĕ,
Салам, сире, салам çурхи кунсем!

3

Паян ялйышăм похода çĕкленнĕн
Пĕр харăс тухрĕ сарлака хире.
Тракторĕсем оркестрсем кĕрленĕн
Вăй-хал çĕклерĕç пирĕн чĕрере.

Руль умĕнче ларать ав тракторисчĕ,
Плугсен касси кĕрет тăпра ăшне.
Хăй савăнса хавассăн кулса илчĕ,
Темскер каларĕ, —пулчĕ шав айне.

Мотор шавне епле çĕнме пултарăн,
Унра хĕрет халь улăпла вăй-хал.
Плугсен касси касса пырать-çке тарăн,
Тăпра выртать çавăрăнса кал-кал.

Куракĕсем хыçран вĕçсе çӳреççĕ,
Апат шыраççĕ мар-и тупăшса?
Агрономпа бригадирсем килеççĕ,
Ака çинчен хĕрӳллĕ калаçса:

„Эпир акса хăварнă ылттăн тулă
Илем кӳрсе çĕкленĕ уй-хире.
Пĕлтĕрхинчен ик хут вăл пулĕ тулăх,
Пур ырă ĕмĕт пурнăçа кĕрет“.

Тăван хирте халь тракторсем шавлаççĕ,
Симфони пек янраççĕ сассисем.
Агрономпа бригадирсем утаççĕ,
Вĕсем халех уй-хир сăнне кураççĕ:
Ĕмĕтсенче кашлаççĕ тырăсем.

4

Мăнаç хирте çурхи ĕçсем вĕçленчĕç.
Çавна пула кунта пуху паян.
Хир варринче трибуна та çĕкленчĕ,
Чăн-чăн трибуна,—чăрăш хăмаран.

Ялйышăмсем йĕри-тавра тăраççĕ,
Йăл кулăпа çиçеççĕ пичĕсем.
Тăван ялти музыкантсем выляççĕ,
Чуна çĕклентерсе, хавас маршсем.

Сăмах пуçларĕ председатель лăпкăн,
Хумханнăран кăшт ӳсĕрсе илет.
Ялйышăмсем ăна итлеççĕ шăппăн,
Ăна тавралăх, аслă хир итлет.

„Эпир калатпăр: çуркунне хаваслă,
Çурхи кунра çирĕпленет вăй-хал.
Пирте ялан-çке ĕмĕт-шухăш аслă,
Çурхи кун пек, туссем, умри пуласлăх,
Хĕрӳ ĕçпе кĕрер малашлăха!

Хир талкăшпех тин шăтнă, ешĕл тулă.
Чун савăнмасть-и ун çине пăхсан?
Кашлатăр, ӳстĕр тулă тулăх,
Кĕр кунĕнче ĕçсемшĕн Мускавран
Салам илер, ялйышăм, Çулпуçран!“

Пĕр харăс шăпăртатрĕ—çупрĕç алă
Хастар чĕреллĕ ялăм-йышăмсем.
Уй-хир çинчен куçне илмест-çке халăх,
Юрра пуçларĕç харăссăн вĕсем.

1952

## БАКЕНЩИК

Анлă Атăл хĕррине ансассăн
Эп ăна куратăп час-часах.
Вăл мана кĕтсе илет хавассăн,
Хăй тăванĕ пек хапăлласа.

„Эсĕ,—тет,—мана манма пуçларăн,
Курнăçасшăн мар-им мучипе?
Тен, тивĕçлипе хăналаймарăм
Хам пĕçернĕ пулă шӳрпипе?“

Çав шӳрпе ун—хăнасен апачĕ,
Унпала ялан вăл чыс тăвать.
Хăй çине пăхсассăн, сăн-сăпачĕ
Шыв хуçинни евĕр туйăнать.

„Чинăмпа эп пĕчĕк çын вĕт,—тет вăл,—
Ĕçĕм ман çынна пит курăнмасть.
Анлă Атăл кăларсассăн тăвăл,
Тин пуçлатăп паттăр пек туйма.

Каç пулсассăн, тăвăла пăхмасăр,
Эп каятăп бакенсем патне.
Мĕн пулсан та, вĕсене çутмасăр
Пурпĕрех тухман çыр хĕррине.

Манăн ĕçĕм пит ответлă халĕ.
Ăнсăртран пĕр бакенĕ сӳнсен,
Мускаври аттемĕр мĕскер калĕ?
Аван мар вăл ун çинчен пĕлсен.

Кур, ав аслă стройкăна каяççĕ
Баржăсем те тĕрлĕ сулăсем.
Бакен сӳнтĕр—ăшăха лараççĕ,—
Уншăн ятлĕç стройкăри çынсем“...

Çут хĕвел анса ларма пуçларĕ.
Мучи тытрĕ çирĕп кĕсменсем.
Бакенсем çутмашкăн ишсе кайрĕ
Пысăк чунлă, кăмăллă этем.

1952

## ВĂЛ ПИРĔНПЕ

Тăван хире-çке тухнă чух ялан
Пĕр çын сăнарĕ куçăм умĕнче.
Пĕр çын пырать пек çуммăн санпалан
Хĕвел пек сарă тырă пуссинче.

Утса пырать пек уççăн калаçса,
Ыйтса пĕлет ялйышăм пурнăçне.
Сăмах хушатăн эсĕ хумханса,
Именнĕ пек пăхатăн ун çине.

Вăл ăнланать те сан хумханăвна,
Ăшă сăмах хушать чун-чĕререн.
Ытарайми пăхать хăй таврана,
Хум хускатать хир вăшăл çил вĕрсен.

Татса илет вăл тулă пучахне,
Ывçи çине хурса пăхса тăрать:
„Пăхсамăр,—тет,—пăхсамăр ун çине,
Мĕнле таса, мĕнле вăл шултăра".

Тăван хирте ĕçленĕ чух ялан
Чи хаклă çын сăнарĕ умăмра.
„Кĕрсе курсамăр, ман тăван яла",—
Тесе чĕнен ăна пур кăмăлран.

Вăл килĕшет, кĕрет ял варрине,
Ялйышăмсем тухаççĕ урама.
Салам сунать хаваслăн кашнине,
Ыр кăмăлĕ çĕклет-çке чунăма.

Кашни ăна чĕнет-çке хăнана,
Чысласшăн пурте хăйĕн килĕнче.
Куçран пăхсах пире вăл ăнланать,
Чи ырă кулă унăн сăнĕнче.

Утар хуçи тухать те ак мала,
Савса чĕнет: „Пырсам,—тет,—утара.
Тутанса пăхăр пирĕн сар пыла.
Тахçантанпах сире кĕтсе ларать“.

Унтан пырать утне ташлаттарса
Тăван ял конюхĕ çулпуç патне:
„Пырса курсамăр, кăмăлăр пулсан,
Эпир ӳстернĕ урхамахсене“.

Кашни чĕнет ăна пырса курма
Хăй юратса ĕç тунă вырăна.
Епле телей унпа пĕрле пулма
Çĕршывăмри хастар, ĕçчен çынна!

Вăл килĕшет, чĕннĕ çĕре пырать.
Савăннăран хăвăрт тапать чĕре.
Пире хăй ыррăн, ăшшăн саламлать,
Çитĕнӳсем тума сĕнет пире:

„Маттурăмсем, паян сире курсан,
Чăннипелех эп савăнтăм чунран.
Тавтапуçах, пур ĕçĕрсем кал-кал,
Пулас кунра сунап ырми вăй-хал“...

Чыс кĕреки тăван колхозăмра,
Уяв тăваççĕ харсăр ĕçченсем.
Ларать хаваслăн пирĕн хушăра,
Пĕрле юрлать янравлă юрăсем.

Эпир юрлатпăр вырăс юррине,
Кавказ юрри те уççăн янăрать.
„Юрласа парăр-ха, чăвашлине“,—
Тесе ман ялăм-йышăмран ыйтать...

Куллен тухатпăр сарлака хире.
Чи çывăх çын сăнарĕ умăмра.
Вăл—Мускавра, мухтавлă Кремльре,
Ĕçре ялан пирĕнпеле çумра.

1952

# ТУПМАЛЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| Хӗрлӗ Площадь | 5 |
| Мир декречӗ | 7 |
| Комсомол билечӗ | 9 |
| Май уявӗ | 11 |
| Гимн кӗввине илтсессӗн | 13 |
| Пӗрремӗш саспалли | 15 |
| Ҫ ы р у | 17 |
| „Комсомольская“ станцире | 19 |
| Мускав урамӗнче | 20 |
| Ҫуралнӑ ҫӗршывра | 21 |
| Малтанхи кун | 23 |
| Профессор | 27 |
| Аса килет | 28 |
| Ăҫта эсир, кăвак куҫсем? | 30 |
| Туслăх | 31 |
| Студент сăмахӗ | 32 |
| Студентсен юрри | 33 |
| Яла таврăнсан | 37 |
| Анне | 39 |
| Урам | 41 |
| Клуб умӗнче | 42 |
| Юханшыв | 43 |
| Водопровод | 44 |
| Юрату | 45 |
| Сад пахчи | 46 |
| Тăри | 47 |
| Ҫилсем | 48 |
| Колхоз председателӗ хирте | 49 |
| Пӗрремӗш квитанци | 51 |
| Колхоз хаҫачӗ | 53 |
| Колхозри радио | 54 |
| Сана мӗнпе, мӗнпе эп танлаштарăп | 55 |
| Каҫӗ лăпкăн килчӗ | 56 |
| И, улми, сад улми | 57 |
| Ҫуркунне, ем-ешӗл курăк | 58 |
| Тен, уҫҫăн калама вăтаннă | 59 |
| Тăван колхоз уй-хирӗнчен килсессӗн | 61 |
| Кӗр пуҫламăшӗ | 62 |
| Ывăлӗ | 63 |
| Кама-ха хывнă ҫакă паттăр ывăл | 64 |
| Колхозри парикмахерскинче | 66 |
| Ирхи ӳкерчӗк | 68 |
| Юриех-ши шăпчăк ешӗл вăрманта | 69 |
| Ман чунра чи ăшă юрă туйăм | 70 |
| Хӗрупраҫсем, тархасшăн ан кӳренӗр | 71 |
| Манпала каллех пулмарăн эсӗ | 72 |
| Ҫурхи ӳкерчӗксем | 73 |
| Бакенщик | 76 |
| Вăл пирӗнпе | 77 |

Художник *П. Сизов.*

Редактор *А. Алга.*

Художествен. редактор *М. Силкина.*

Техн. редактор *И. Григорьев.*

Корректора: *И. Иртышев,*
*Н. Деомидов.*

---

НТ 00001. Подписано к печати 18.III-53 г.
Бумага 84×108 1/32. Объем 0,41 п. л.,
учетно-издательских листов 2,71.
Тираж 2 000. Заказ № 275.
Цена 2 р. 35 коп.

---

Типография № 1 Чувашполиграфиздата при
Совете Министров Чувашской АССР.

---

*г. Чебоксары, Володарского, 5.*

Цена 2 р. 35 коп.

Г. ЕФИМОВ

ТЕПЛЫЕ ЧУВСТВА

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
ЧЕБОКСАРЫ — 1953